87-15



Нодар Думбадзе

сăвăсем

# Пилеш кайăкĕ

ББК 84 Груз.
Д 82

# Пилеш кайӑкӗ

Чулпа, патакпа та перетчӗ
Ача ҫак пилеш кайӑкне.
Нихҫан та илтмен те пӗлместчӗ
Вӑл унӑн кӗвви-сассине.

Тинех, акӑ, илтрӗ, тӑнларӗ
Хитре чӗвӗлти юррине.
Ӑна чӗререн вӑл юратрӗ,
Пӑрахрӗ чулне, патакне.

Государственная
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
Чувашской АССР
КОНТРОЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
„17" янв 1987 г.
№

Д 4803010200—144 / М 13(03)—86 96—86

© Чӑваш кӗнеке издательстви, 1986 ç.

87-15

КОНТРОЛЬНЫЙ
ЭКЗЕМПЛЯР

Нодар Думбадзе

# Пилеш кайӑкӗ

сӑвӑсем

Георгий Орлов куҫарнӑ

Эллипе Тимур Юрьевсем илемлетнӗ

Шупашкар Чӑваш кӗнеке издательстви 1986





Нодар Владимирович Думбадзе (1928—1984)— грузинсен чаплă поэчĕ, прозаикĕ, Ленин премийĕпе Государство премийĕн лауреачĕ, вăл Ленинла комсомол премине те илме тивĕç пулнă.

Вăл çырнă «Эпĕ, асанне, Илико тата Илларион», «Эпĕ хĕвеле куратăп», «Хĕвелсĕр кун» романсене пирĕн çĕршыври вулакансем аван пĕлеççĕ.

Нодар Владимирович ача-пăча валли те сахал мар произведени çырнă. Ачасем, ăна юратса тата хисеплесе, «Мзиури» ача-пăча хулине унăн ятне панă.



## Ҫӗнӗ ҫул касӗ

Ҫӗн ҫул касӗ. Юр ҫӑвать,
курӑнса пин-пин ҫип пек.
—Чӑрӑш, эс шӑнмастӑн-и
сивӗ юр ҫивиттипех?

—Ҫук, шӑнмастӑп, ачасем.
Сирӗн савӑнӑҫ мана
ӑшӑтать; хитре, хавас
пулӑр пурте яланах.

Хӗл хаяр та, пурпӗрех
лайӑххи те пур унра.
Хӗл мучи, хыт юратса,
парнесем сире парать.

Вӑрмантан вӑл ҫитрӗ халь
кашнинех телей сунма.—
Чӑрӑш калӗччӗ ҫапла,
шел, пӗлмест вӑл калаҫма.



## Ҫур кунӗ, сарӑ ҫур кунӗ

Ман лӗпӗшсем сывах-ши?
Сывах-ши чечексем?
Мӗнле пурнатӑн, йывӑҫ?
Ӑҫта саркайӑксем?

Хӑҫан ҫеҫке ҫуратӑр,
Ман персиксем, эсир?
Хӑҫан-ши ҫӗр ҫырлийӗ
Татайӑпӑр эпир?

Иртет хӗл... Йӑлтӑр-йӑлтӑр
Ҫиҫет шывланнӑ юр.
Ҫеҫке кӑларӗ лантӑш,
Кӗҫ ларӗ вӑл шап-шур.

Ҫухалтӑр хӗл мучийӗ,
Юрпа перер хыҫран.
Ҫур кунӗ, сар ҫур кунӗ,
Хӑҫан килен, хӑҫан?



## Мулкач

Нимле хурт та ун чухлех
купăста, тен, çиеймест.
Пĕртен-пĕр мулкачă çеç
тăранма çапла пĕлмест.

Çывăратăп эп çĕрле,
пĕчĕк йыттăм çывăрать.
Çав мулкач вăрра килет,
купăста саура кăшлать.

«Эх, маико чиперккем,
Эсĕ памăн-ши сауран
купăста кăштах?» — çапла
ун ыйтасчĕ хăть манран.

Эп хĕрхенмĕттĕм. Ыйтмасть.
Тек вăрçатăп халь ăна.
Шутлăр хăвăр: мухтĕ кам
сĕмсĕре, вăрлакана?



## Тухтăр

Асаннепеле мана
Тухтăр пăхрĕ, кăштахран
Вăл каларĕ ман пирки:
— Чирĕ унăн... шăннăран.

Каминра кăвайт çунать,
Тум та ăшă çийĕтри.
Сивĕ мар мана пачах,
Питĕм çав тери вĕри.

Чир палли те манăн çук, —
Эпĕ вăйсăр вата мар.
Асанне чирлет, сывмар.
Эпĕ сывă та хастар.



## Йĕп

Хăй йĕпне çип тиреймест те
кукамайăм тарăхать.
Çавăнпах вăл ман çине те
кӳренӳллĕ пăхкалать.

Эп сăнатăп, ăнланатăп:
Хытă вăл асапланать.
Эпĕ уншăн кулянатăп,
Чунăм питĕ ыратать.

Эх! çакна ма тавçăрмассĕ
аслисем (пĕлместĕп эп!):
кукамай валли халь кирлĕ
питĕ пысăк-пысăк йĕп.





Пулнӑ пӗр тиха. Иртен
Пуҫласа сӗм-ҫӗрлеччен
Вӑл вылянӑ, ыриччен
Лӑпланса тӑма пӗлмен,
Амӑшне те итлемен.

Ҫав тиха пӗррехинче,
Те ҫӗрле, те ир ҫинче,
Хӑйӗн амӑш сисиччен
Ҫутӑ ӑшӑ витинчен
Тухнӑ тарнӑ тӑр-пӗччен.

Пуҫне хытӑ каҫӑртса,
Ашкӑнса сиксе-чупса
Улӑх хӗррине ансан,
Выҫӑ кашкӑра курса,
Тӑнӑ мӗскӗн чарӑнса.



кашкăр, паллă, кашкăрах,—
вăйлă, çăткăн вăл, кăра.
куççульне эс юхтарах,
пулĕ пурпĕр уссăрах:
кашкăр шеллемест пачах.

ашшĕне те амăшне
итлемен пуçтахсене—
йăрă тилĕ çурине,
хур е чăх чĕпписене...
кĕтĕ хурлăх кашнинех.

....................................

пулнă пĕр тиха, анчах
çук вăл ĕнтĕ тахçанах.



## Куҫлăх

Куҫлăх — лайăх япала вăл
Тетĕн эсĕ, асанне.
Темшĕн ҫавăн пек калатăн,
Эп пĕлместĕп сăлтавне.

Кушака та кураймарăм
Эпĕ сан куҫлăхупа.
Унсăрах куҫу начар сан,
Эсĕ ан ҫӳре унпа.



## Чĕп ăмăшĕ

Мана ямасть хăй çывăхне вăл –
Çунат сарса сăхма тăрать.
Çăмха пек сар чĕпписене
Тем тăвасран вăл пит хăрать.

Ытла, ытла хаяр чĕп амăш!
Вăл сикрĕ ман çине вăштах.
Унпа йĕркеллĕ калаçма та
Ман кăмăл çук ĕнтĕ пачах.



## Кетти хĕвеле калать

Тăхта, тăхта эс, сар хĕвел,
Халех ан лар эс тинĕсе,
Унта аттесĕм пулăра,
Кимме эс ярăн тивертсе.

Эп пулăшаймăп аттене.
Епле пурнас ман ун чухне?

Тăхта, тăхта эс, сар хĕвел,
Тăхта, эп юлмăп парăмра.
Сана эп мухтăп ал çупса,
Ирпе, эс тухнă вăхăтра.



## Эп тупа туса калатăп

Вулама, çырма вĕрентĕр,
Ĕнтĕ эп те пысăках.
Ярăр-ха шкула мана та,
Тек сада каймастăпах!

Халĕ çĕр таран шутлатăп,
Çитрĕ эпĕ ултă çула.
Пĕлтĕр пĕчĕкçĕ кăначчĕ,
Хытă ӳсрĕм çак çулла.

«Пиллĕк» çеç илме пулатăп,
Эп тупа туса калатăп.

## Нана

Кам-ши мăкăньсем тĕрленĕ
сан кĕпӳ çине, йăран? —
терĕ манăн йăмăк Нана
пахчана ирпе тухсан.
Мана питĕ-питĕ кирлĕ
çавăн пек кĕпе паян.



## Кӳренӳ

Пĕр уйăх ĕнтĕ кушака
пуш-пушă ывăсĕ çине
хурса памастăп кăлпасси,
памастăп çу е аш-çиме.

Ăна кӳрентĕм каçарми:
тискеррĕн тытрĕ вăл хăйне —
Эп чарайтмарăм! — пахчара
тустарчĕ кайăк йăвине.



Пӗрре кино эп куртӑм,
Вилеттӗмччӗ кулсах:
Чӑх тилӗпе пурнатчӗ
Пӗр пӳлӗмре туслах.

Ку ҫех-и тӗлӗнтерчӗ
Мана ун чух! Кӗҫех
Шӑши хӑна пек килчӗ
Кушак килне хӑех.

Чӗрӗп укол та турӗ
Чирленӗ куяна.
Сулъха каларӗ сӑвӑ
Хӑпартлансах; ӑна

Хытса кайса итлерӗҫ
Пакша, улатакка...
Упа кӗреш ҫӗклерӗ,
Пӑрахрӗ аякка.

Ҫын евӗр хӑй калаҫрӗ
Сӑпайлӑн йытӑпа,
Вылянчӑк, йӑлтӑр сӑрӑ
Ҫилхеллӗ кашкӑрпа...

Унтан темскерччӗ... Мантӑм...
Эп ыйӑхран вӑрантӑм.

## Йоҫарика хăни

Юмахра тахҫан ку пулнă...
Йăлт пĕтернĕ хĕл алли,
хăвартан хура сырла та-
ним те! — Чинчрака[1] валли.

Вырсна, хытăркана кайăк
тухнă сивĕ вăрмантан:
— Тусăм, кĕртмĕн-и? — вăл ыйтнă
пĕчĕк йоҫарикăран.

Мĕншĕн кĕртмĕ? Вăл херхеннĕ
инкекри ҫав чĕрчуна.
Вырăн панă, тăрантарнă
Вăл ăна кашни кунах.

Чинчрака ҫапла ыр курнă
хăнара сар суртченех.
Йоҫарикăшăн юрланă
ҫепĕҫ юрă ҫăвĕпех.

[1] Чинчрака — грузи халăх юмахĕнчи кайăк.

## ТУПМАЛЛИ


ÇĔН ÇУЛ КАÇĔ 3
ÇУР КУНĔ, САР ÇУР КУНĔ 4
МУЛКАЧ 5
ТУХТĂР 6
ЙĔП 7
ТИХА 8
КУÇЛĂХ 10
ЧĔП АМĂШĔ 11
КЕТТИ ХĔВЕЛЕ КАЛАТЬ 12
ЭП ТУПА ТУСА КАЛАТĂП 13
НАНА 14
КӲРЕНӲ 14
«ПĔРРЕ КИНО ЭП КУРТĂМ...» 15
НОДАРИКА ХĂНИ 16



*Для дошкольного возраста*

**Нодар Владимирович Думбадзе**

ЯРОЗЯ

Стихи

**Перевод с грузинского Г. Ф. Орлова**

**Редактор П. Е. Димитриев**
Художник **Э. М. Юрьев**
Художественные редакторы **Г. С. Самсонова, Э. М. Юрьев**
Технический редактор **В. П. Окина**
Корректор **Р. К. Куприянова**

ИБ 1854

Сдано в набор 10.11.86. Подписано к печати 25.11.86.
Формат $70 \times 108^1/_{16}$. Бумага офсетная № 1.
Гарнитура «Думбадзе-чувашская» (рукописная).
Печать офсетная. Усл. печ. л. 1,40.
Усл. кр.-отт. 8,05. Учетно-изд. л. 2,34. Тираж 4000 экз.
Заказ № 4006. Изд. № 96. Цена 20 коп.

Чувашское книжное издательство,
428000. Чебоксары, пр. Ленина, 4

Типография № 1
Государственного комитета Чувашской АССР
по делам издательств, полиграфии и книжной торговли,
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.

20 пус



ЧӐВАШ КӖНЕКЕ
ИЗДАТЕЛЬСТВИ